# ШУПАШКАР ÇУТИ

Сăвви те, кĕвви те **А. Кибечĕн**




Шурăмпуç çути тӳпене ӳксен,
Тĕксĕм пĕлĕтсен чаршавне сирсен,
Васкаса утап савни сан патна,
Çепĕç туйăмпа кĕтсе ил мана.

Шупашкар çути тӳпене ӳксен,
Шавлă урамсем лăпланса çитсен,
Чунăм хăвалать санпа тĕл пулма,
Ытамра тытса куçăнтан пăхма.

Шупашкар çути тӳпене ӳксен,
Атăл шевлисем йăлкăшса илсен,
Пирĕн юрату çиçтĕр хытăрах,
Ĕмĕтленнĕ туй çиттĕр хăвăртрах.










Чăваш Ен варринчи Канаш Енĕм
Шурăмпуç çутипе вăрансан,
Пуç таять таврана ял ĕçченĕ
Çĕнĕ кун акине пуçăнса.

Юр юрлатпăр чунтан савăнса та,
Канаш Енĕм, сана ыр сунса,
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана ыр сунса!
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана ыр сунса!

Çăл куç пек тапакан çĕр сĕткенĕ
Вăй парать Çеçпĕл пек çĕкленме,
Ваттисен сăмахне итлекенĕ
Пил илет телейпе киленме.

Юр юрлатпăр чунтан савăнса та,
Канаш Енĕм, сана юратса,
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана юратса!
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана юратса!

Пĕрлĕхе упракан тус-тăванăм
Тав тăвать сана халь чĕререн,
Ĕмĕрех санра пирĕн хавалăм –
Тĕреклен кунсерен, Канаш Ен!

Юр юрлатпăр чунтан савăнса та,
Канаш Енĕм, сана мухтаса,
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана мухтаса!
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана мухтаса!